Петров-Каштан П. Экран çине тухĕ-и? : [П.Н. Кудряшов поэтăн «Нарспи» поэми тăрăх киносценари çырни çинчен] / П. Петров-Каштан // Коммунизм ялавĕ. – 1989. – 13 çурла.

*• Тăван культура архивĕнчен*

# ЭКРАН ÇИНЕ ТУХĔ-И?

Чăваш литература никĕсне хываканĕ тата чăваш литературин классикĕ К. В. Иванов çырнă «Нарспи» поэма тăрăх чăваш писателĕсемпе драматургĕсем, композиторĕсем пьесăсем те, опера та çырчĕç. Анчах та çак вилĕмсĕр произведени тăрăх киносценари çырас тĕлĕшпе чăвашсен, вырăссемпе ытти халăхсен писателĕсемпе драматургĕсем хăйсен пуçарулăхĕпе пултарулăхне ку таранах çитсе те палăртмарĕç-ха. Çак тивĕçе чи малтан К. В. Ивановăн еткерлĕхне пухас тĕлĕшпе 1935 çултан пуçласа мĕн виличчене (1977 çул) ĕçленĕ П. Н. Кудряшов хăй çине илнĕ тесен, ман шутпа, пĕрте йăнăш пулмасть.

П. Н. Кудряшов К. В. Ивановăн пултарулăхне пропагандăлас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем туни Пушкăрт республикинче кăна мар, Чăваш республикинче те чылай çын пĕлет. Вăл 1937 çултан пуçласа К. В. Ивановăн еткерлĕхне пĕрчĕн-пĕрчĕн пухса, поэт çуралнă ялта — Слакпуçĕнче — 1940 çулта музей йĕркеленĕ. 1941—1946 çулсенче, хăй фронтра пулнă вăхăтра, музей пĕтсе ларас патнех çитнĕччĕ. Вăрçăран таврăннă лейтенант тӳрех Слакпуçне пырса музей çуртне йĕркене кĕртессишĕн ĕçлеме пуçлать. Унта вăл 1946 çултан пуçласа мĕн пенсие тухиччченех ĕçлет. Пенсие тухсан урăх вырăнта пурăннă пулин те, Слакпуçне час-часах пырса çӳресе, музея пуянлатма тăрăшать.

К. В. Ивановăн «Нарспи» поэми тăрăх киносценари çырас шухăш 1935 çултах тĕвĕленнĕ. Ун чухне П. Н. Кудряшов Ленинградри востоковедени институчĕн этнографи факультетĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарти, Севастопольти, Иркутскри музейсенче наука сотрудникĕ пулса ĕçленĕ. Анчах та ăна хăй çуралса ӳснĕ тăван тавралăха (Пушкăрт республикинчи Пишпӳлек ялĕ) таврăнас шухăш канăç паман. Ĕлĕкхи чăваш юррисене, юмахĕсене, ваттисен сăмахĕсене, чăваш халăхĕн тумĕсемпе ĕç хатĕрĕсене пуçтарса, Пишпӳлек тăрăхĕнчи Алексеевка поселокĕнче краеведени музейĕ йĕркеленĕ. Эпĕ çав вăхăтра Пишпӳлекри тулли мар вăтам шкулта вĕренеттĕм. Вăл пирĕн шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен С. Н. Герасимов учительпе туслăччĕ. Семен Николаевич вăл вăхăтра «Уксине» ятлă пĕр пьесине Шупашкарта, «Сыв пул» ятлă сăввине Хусанта тухакан «Утăм» альманахра пичетленĕччĕ. Киносценари çырнă. С. Н. Герасимов Аслă Отечественнăй вăрçăра пуç хунă. П. Н. Кудряшов вара С. Н. Герасимов ĕмĕтне пурнăçа кĕртес тенĕ пулас, хăй те киносценари çырма шухăш тытнă. Анчах та уйрăм çынна пысăка хурса хакланă тапхăрта, Петр Николаевича пĕр сăлтавсăрах айăпланă. Ун хыççăн вăл Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пулнă, каярах музей ĕçĕ вăхăта нумай илнĕ. 1970 çулта К. В. Иванов çуралнин 80 çул, Чăваш автономине туса хуни 50 çул тултарнă тĕле кăна П. Н. Кудряшов хăй ĕмĕтне пурнăçласа Н. О. Исаевпа пĕрле К. В. Ивановăн «Нарспи» поэми тăрăх киносценари çырса пĕтернĕ.

Пирĕн алăра киносценарин машинкăпа çапнă тексчĕн пĕр экземплярĕ кăна. Сценари тексчĕн алçырăвĕ ăçта иккенне пĕлместпĕр.

Вăл киносценарие К. В. Иванов çуралнăранпа 80 çул çитнĕ тĕле экран çине тухмалла туса çитерейменни пулас. Çавăнпа та ăна «Нарспи» авторĕн 90 çулхи тата Чăваш республикин 60 çулхи юбилейĕсем тĕлне çырса пĕтерес ĕмĕт-шухăшпа пурăнчĕ. Анчах та вăхăтсăр вилĕм хастар чун-чĕреллĕ çыннăн ĕмĕтне татрĕ. Сценарин иккĕмĕш авторĕ Н. О. Исаев кам иккенне те тата ăçта пурăннине те тĕплĕн пĕлместпĕр. Сăмаха вĕçлесе çакна каласшăн: П. Н. Кудряшов çырнă киносценари, вăл халлĕхе экран çинче курăнман пулин те, чăваш литературипе искусствин ылтăн фондне кĕрсе юлма тивĕç. Вăл ыттисене ку ĕçе вĕçне çитерме хавхалантартăрччĕ.

**П. ПЕТРОВ-КАШТАН.**
Пушкăрт АССРĕ,
Пишпӳлек ялĕ.